Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

83 (7723) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи октябрĕн (юпа) 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Октябрĕн 18-мĕшĕ – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ

## Кашни яла – такăр çул

Çулсене пурнăç артерийĕсемпе ахальтен танлаштарман. Хальхи вăхăтра ялсене çитме, ял урамĕсенче йĕркеллĕ çулсем пулманни пысăк чăрмавсем кăларса тăрататать. Çавна май республика Президенчĕ те, республика Правительстви те кашни ял патне асфальт сарнă çулсем туса çитерме ятарлă программа йышăннăччĕ. Пирĕн район пирки калас пулсан, вăл ăнăçлă пурнăçланчĕ темелле. Халĕ вара ялсенче çулсем тăвассипе ытларах ĕçлес пулать. Ку та пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту.

Чи малтанах çавна каласа хăварасшăн. Пире хăтлăх парнелекенсем, йĕркеллĕ çулсем туса паракансем вĕсем – çул-йĕр строительствин ĕçченĕсем. Пирĕн районта çул-йĕр строительствин ятарлă организацийĕсем çук. Апла пулин те çак ĕçпе тӳрремĕнех çыхăннисем сахал мар. Çавна май вĕсене хăйсен професси уявĕпе – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе – чĕререн тата ăшшăн саламлатăп. Ырлăх-сывлăх пултăр сире, ĕçĕрсем ăнса пыччăр.

Палăртма кăмăллă, юлашки çулсенче кăна мар, районта яланах çул-йĕр строительстви çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Уйрăмах иртнĕ çул район территорийĕнче асфальт сарнă çулсем тăвассипе пысăк чикĕсене çĕнсе илме май килчĕ. Çакă, паллă ĕнтĕ, иртнĕ çул Республика кунне пирĕн районта иртternипе те çыхăнман мар. Çапла вара пĕтĕмпе 23,843 километр асфальт çулсем туса хута ятăмăр, муниципаллă çул-йĕре 5,958 километр юсарăмăр.

Хальхи вăхăтра кирек епле ĕç те укçа-тенкĕпе çыхăннă.



Çитменнине çул-йĕр тума уйрăмах нумай укçа-тенкĕ уйăрма тивет. Çул-йĕр строительствин материалĕсем йӳнех мар. Йĕркеллĕ çулсем хута яма республика та пысăк пулăшу панине палăртма кăмăллă. Района çак тĕллевпе республика бюджетĕнчен 65187,6 пин тенкĕ уйăрса панăччĕ. Вырăнти бюджетран вара 26484,36 пин тенкĕ уйăрма майсем тупрăмăр. Кунсăр пуçне республика шучĕпе тата вăйĕпе çулсем 393308 пин тенкĕлĕх тунă, район территорийĕнчи республика çулĕсене 40 километр юсанă.

Вăтăра яхăн маршрутпа çулсем тăвас ĕçсем пычĕç.

Çак ĕçсене вăхăтра туса юлтăмăр темелле. Хальхи экономика кризисĕн тапхăрĕнче çулсем тăвассипе те йывăрлăхсем пайтах. Çулсем ĕçе кĕртесси те палăрмаллах чакрĕ. Апла пулин те кăçал республика пулăшнипе Ильинкăпа Тренккă ялĕсене йĕркеллĕ çулпа çыхăнтарма пултартăмăр.

Хальхи вăхăтра ял урамĕсенчи çулсене юсаса пăхса тăрассине ял тăрăхĕсем çине шаннă. Кăçал çак тĕллевпе республика бюджетĕнчен тата вырăнти бюджетран 6546 пин тинкĕ уйăрма пăхнă. Çулсене тикĕслеме, хĕллехи вăхăтра вĕсене юртан тасатма 2837 пин тенкĕ уйăраççĕ.

Район территорийĕнче федераллă трасса 27 километр, республика пĕлтерĕшлĕ çул-йĕр 93,9 километр, вырăнти муниципаллă çулсем 284,567 километр шутланаççĕ. Вĕсене кирлĕ пек пăхса тăрасси – çул-йĕр строительствинче вăй хуракансен пархатарлă тивĕçĕ.

Çулсене тытса тăрассипе «Волгодорстрой» ООО, «ПТС-1» ООО, «Автодорсервис» ОАО, «Водстрой» ОАО, республика пĕлтерĕшлĕ çулсене пăхса тăрассипе «ДЭП-146» ОАО пысăк ĕç туса иртереççĕ. Çавăнпа та çул-йĕр строительствипе çыхăннă районти ĕçченсемпе пĕрлех асăннă строительство организацийĕсенче вăй хуракансене те уяв ячĕпе саламласа пархатарлă ĕçĕсемшĕн тав сăмахĕ калатăп.

**В. НИКИТИН,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи.**

**ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе саламлатăп!

Йĕркеллĕ çулсен пирĕн пурнăçри пĕлтерĕшне палăртмасăр май çук. Вĕсем обществăлла инфраструктурăн пысăк пĕлтерĕшлĕ тытăмĕ, Чăваш Енĕн тата Раççейĕн тăнăç экономикăпа социаллă аталанăвĕн факторĕсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Автомобиль сечĕсене тăвасси, тытса тăрасси тата вĕсемпе йĕркеллĕ усă курасси – çăмăл мар тата ответлă ĕç. Кунта кашниех ответлăха туйса ĕçлени, вăй-хал тата кăмăл çирĕплĕхĕ кирлĕ. Чи хăюллă та пĕлтерĕшлĕ плансене пурнăçа кĕртсе пынă май эсир республикăра пурăнакансен тата предприятисен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтеретĕр, хăвăр тăван çĕре юратнине, татах çӳллĕрех чикĕсем çĕнсе илме хатĕр пулнине кăтартса паратăр.

Чăваш Енри çул-йĕр ĕçченĕсем яланах хăйсен пысăк профессионализмĕпе, шанса панă ĕçе чунтан парăннипе тата тимлĕхпе палăрса тăнă. Паян, пур ялсене те асфальт сарнă çулсемпе çыхăнтарас тĕлĕшпе йышăннă анлă проекта пурнăçа кĕртнĕ май, республикăра хуласемпе ялсем хушшинче шанчăклă транспорт çыхăнăвĕ туса хунă. Хула округĕсен урамĕсенчи çул сечĕсене, кĕперсемпе çулсен юпленĕвĕсене тăвас тата юсас ĕçсем пыраççĕ. Çавна палăртма кăмăллă: отрасль предприятийĕсем ума лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлаççĕ. Вĕсем тухăçлă ĕçлесе пыни Чăваш Ене илемлĕрех, конкуренцие чăтăмлăрах тата пурăнма хăтлăрах тума май парать.

Сире ĕçе юратнишĕн, умри тĕллевсем патне ăнтăлнишĕн, мĕн тунипе лăпланса пурăнманнишĕн тата энергишĕн тав сăмахĕ калатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, малашне те ӳсĕмсем, ăнăçу тата телей сунатăп!

**Н.В. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çул-йĕр ыйтăвĕ пирĕн районта малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри шутланать. Çĕнĕ çулсем хута кайни хăех район малалла аталаннине, халăхăн пурнăç условийĕсем лайăхланса пынине кăтартса парать. Çавăн пекех çул-йĕр çинче пулакан инкексен шутне чакарма пулăшать. Çапла майпа хăвăрăн ĕçĕрпе çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха çирĕплетме те пулăшатăр. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В.Федоровăн Чăваш Республикинчи автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем çинчен калакан Указĕ ку тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме, районти кашни ял патне йĕркеллĕ çул тума май пачĕ. Республика пĕлтерĕшлĕ çулсене те юсаса йĕркене кĕртрĕмĕр. Ырми-канми ĕçĕрпе эсир район экономикипе социаллă пурнăçне çирĕплетме пулăшатăр. Тавах сире çакăншăн.

Умра тăракан тĕллевсем те пĕчĕк мар: ялсенче çул тума пуçламалла. Пĕтĕм тĕнчери финанс кризисĕ йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ пулин те, çак ыйтăва пирĕн кун йĕркинчен кăлармалла мар.

Эсир малашне те çул тăвас, юсас, пăхса тăрас ĕçре тăрăшуллă та пуçаруллă пуласса шанса тăратăп. Ĕçĕрсем малалла та ăнса пыччăр. Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, сунатăп. Çемйĕрсенче те юратупа килĕшӳ, тату пурнăç ан иксĕлтĕр.

**Ю.А. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

Тăхăр уйăх итогĕсем

## Ял хуçалăхĕ: выльăх-чĕрлĕх отраслĕ

Аш-какай туса илесси иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 5,4 процент чакнă, 4584,9 тоннăпа танлашнă. Ял хуçалăх предприятийĕсенче ăна 1141,3 тонна (иртнĕ çулхипе танлаштарсан 69,9 процент), уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче 3365 тонна (107,4 процент), пĕчĕк тата вăтам ял хуçалăх организацийĕсенче, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 78,6 тонна (94,4 процент) туса илнĕ.

Сĕт пĕтĕмпе 37239,1 тонна суса илнĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтрин 101,6 проценчĕ пулать. Ял хуçалăх предприятийĕсенче 7201 тонна (88,6 процент), уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче 29964,7 тонна (105,4 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 73,4 тонна (68,5 процент) сĕт суса илнĕ. Районĕпе пĕтĕмĕшле пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 3804 килогрампа (109,5 процент) танлашнă. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче кашни ĕне пуçне вăтамран 3182 килограмм (108,3 процент) сĕт сунă.

Çăмарта туса илесси унччченхинчен 4,3 процент ӳснĕ. Отчетлă тапхăрта пĕтĕмпе 48589,9 пин штук çăмарта илнĕ. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 41603,3 пин (107 процент), уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче 6980,3 пин (90,7 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 6,3 пин (61,2 процент) штук.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 536 грамм (104,1 процент), сыснасем 329 грамм (98,2 процент) ӳт хушнă. Пăрусемпе çурасем илесси чакнă. Иртнĕ тăхăр уйăхра пĕтĕмпе 1623 пуç (92 процент) пăру, 11620 пуç (95,8 процент) çура илнĕ.

Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне аш-какай районĕпе вăтамран 72,8 центнер (94,6 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 36 центнер (98,6 процент), сĕт районĕпе 591,1 центнер (101,6 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 227,2 центнер (124,4 процент) туса илнĕ.

Хресчен (фермер) хуçалăхĕсемсĕр пуçне выльăхсен йышĕ чакса пыни сисĕнет. Хальхи вăхăтра мăйракаллă шултра выльăхсем районĕпе 17316 пуç (91,8 процент), уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче 11778 пуç (92 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 115 пуç (109,5 процент) шутланаççĕ. Ĕнесем пĕтĕмпе 9789 пуç (92,8 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 2169 пуç (84,8 процент), уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче 7595 пуç (95,3 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 25 пуç (108,7 процент).

Официаллă

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## 2010 çулта Республика кунне ирттересси çинчен

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин патшалăх уявĕ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн, Чăваш Республикин муниципалитет пĕрлĕхĕсен социаллă пурнăçпа экономикине çирĕппĕн аталантарас, вĕсен инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес тĕллевпе çапла йышăнатăп:

1. 2010 çулта Республика кунне уявлассипе çыхăннă тĕп мероприятисене хатĕрленсе ирттерессине Шупашкар хулинче, çавăн пекех Чăваш Республикин муниципалитет районĕсен тата хула округĕсен Республика кунне уявлассипе çыхăннă мероприятисене вĕсен территорийĕнче ирттермелли право çĕнсе илмелли конкурсра çĕнтернĕ Патăрьел районĕнче йĕркелес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

2010 çулта Республика кунне хатĕрленсе ирттерес енĕпе пурнăçламалли мероприятисен планне хатĕрлемелле тата çирĕплетмелле;

конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн Патăрьел район администрацине ялсен общество инфратытăмне малалла аталантарма укçа-тенкĕ уйăрса памалла.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2010 çулта йăлана кĕнĕ «Акатуй» уявĕсем, Республика кунне халалласа ытти культмассăллă тата спорт мероприятийĕсем ирттерме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2009, юпа, 9, 68 №.

Саламлатпăр



Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах аннене – Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Любовь Леонидовна НАЛИМОВАНА** октябрĕн 18-мĕшĕнче 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ те телейлĕ, вăрăм кун-çул сунатпăр. Пурнăçу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 2 мăнукĕ.**

Катькас ял тăрăхне кĕрекен Ярак ялĕнче пурăнакан хисеплĕ те хаклă тăванăмăра, аппана, йăмăка – **Васелиса Васильевна ЗАМЯТИНАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр, яланах çирĕп сывлăхлă пул. Чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, çăл-куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр.

Çамрăклах мăшăрсăр юлтăн пулсан та икĕ хĕрӳпе икĕ ывăлна пурнăç çулĕ çине кăлартăн. Темĕнле йывăр пулчĕ пулин те пуçна усмарăн, малалла хăрамасăр çирĕппĕн утрăн.

Ачусемпе мăнукусем яланах сана савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу ăнса пытăр, ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕсем: Ильмендеровсем, Иванщиковсем, Николаевсем, Михеевсем, Вязовсем тата çывăх тăванĕсем.**



Хаклă хĕрĕме, савнă мăшăра, юратнă аннене, кăмăллă кукамая, хисеплĕ тăванăма – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Ираида Михайловна ТИХОНОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, мĕн пур кăмăлтан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕçре ăнăçусем, килте яланах килĕшӳпе тату пурнăç пултăр. Çирĕп сывлăхпа вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Çак кунах мăшăрĕпе – Алексей Иванович Тихоновпа пĕрлешни 28 çул пулчĕ. Вĕсене çак ятпа саламласа малалла та пĕр-пĕрне килĕштерсе, хисеплесе пурăнма вăй-хал сунатпăр. Ачусемпе, мăнуксемпе, тăванусемпе пĕрле савăнса татах та нумай пурăнмалла пултăр сирĕн.

**Саламлаканĕсем: амăшĕпе хуньамăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, шăллĕпе йăмăкĕн çемйисем, тăванĕсем.**

ÇЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**